Пенси ыйтăвĕсемпе

# Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем валли

Раççей Федерацийĕн Правительствин 2010 çулхи мартăн 18-мĕшĕнчи 167 тата 169 номерсемлĕ йышăнăвĕсемпе ватлăха пула, инвалида тухнине пула тата çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан ĕç пенсийĕсене 6,3 процент ӳстернĕ. Кунпа пĕрлех 8,8 процент чухлĕ социаллă пенсисене, инвалидсене, вăрçă участникĕсене, радиаци тата техногенлă катастрофăсенче шар курнисене тата вĕсен çемйисене, унсăр пуçне Тăван çĕр-шыв умĕнче тунă уйрăмах пысăк ĕçсемшĕн хисепе тивĕçнисене те ӳстерсе панă.

Апрельте пенси виçисене ӳстернине пула Муркаш районĕпе ĕç пенсийĕсен виçи вăтамран 379 тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ, 6374 тенкĕпе танлашрĕ. Социаллă пенсисен шайĕ 334 тенкĕ чухлĕ ӳсрĕ, халĕ вăл 4236 тенкĕпе танлашать. Икĕ пенси илсе тăракан Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсен хушма тӳлевĕ вăтамран кашни уйăх пуçне 1194 тенкĕпе танлашрĕ. Халĕ вĕсем уйăхне вăтамран 17850 тенкĕ илсе тăраççĕ. Пенси тӳлесе тăма уйăхсерен уйăракан укçа-тенкĕ сумми апрель уйăхĕнчен тытăнса республикипе 140 миллион тенкĕ чухлĕ ӳснĕ.

2010 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен тӳлесе тăракан укçа сумми, çавăн пекех соцпакет хакĕ те 10 процент чухлĕ хăпарчĕ. Çакна 2009 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче йышăннă «О федеральном бюджете на 2010 год и на плановый период 2011 и 2012 годов» Федераллă саккунпа пăхса хунă.

Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансем валли соцпакет хакĕ апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса уйăхне 705,10 тенкĕпе танлашрĕ. Вăл шутран медицина пайĕ (врач рецепчĕпе эмелсем илесси, врач сĕннипе санаторисене кайма путевкăсем илесси) – 627 тенкĕ, транспорт пайĕ (хула çывăхĕнчи поездпа тӳлевсĕр çӳресси тата кирек епле транспорт хатĕрĕпе те санаторие кайса килесси) – 78,10 тенкĕ.

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2010 çулхи февралĕн 24-мĕшĕнче йышăннă 247 № «О единовременной выплате некоторым категориям граждан Российской Федерации в связи с 65-летием победы в Великой Отечественной войне 1941–1945 годов» Указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикинче апрель уйăхĕнчен пенсипе пĕрлех пĕр хутчен паракан тӳлеве Аслă Отечественнăй вăрçăн 46 пин ытла ветеранĕ илет. Пĕтĕмĕшле сумма – 101 миллион тенкĕ ытла:

– 5000 тенкĕне çаксем илеççĕ: Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕсем тата ветеранĕсем, концлагерьсен çул çитменнисен узникĕсем, Финляндипе, Аслă Отечественнăй вăрçăра, Японипе çапăçса çĕре кĕнĕ çар çыннисен пĕччен юлнă мăшăрĕсем, çĕре кĕнĕ Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе инваличĕсен пĕччен юлнă мăшăрĕсем;

– 1000 тенкĕне çаксем илеççĕ: тылра 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнчен тытăнса 1945 çулхи майăн 9-мĕшĕчченхи тапхăрта 6 уйăхран кая мар ĕçленĕ Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсем (СССР-ăн вăхăтлăх оккупацире пулнă территорийĕсенче ĕçлени шута кĕмест), Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенчи хастар ĕçшĕн СССР орденĕсемпе медалĕсене тивĕçнисем, нацистсен концлагерĕсемпе тĕрмисен, гетто узникĕсем.

**Федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен çак виçепе тӳлеме тытăнаççĕ:**

| Çăмăллăхсемпе усă куракансен категорийĕсем | 2010 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса уйăхсерен пĕр хутчен çакна шута илсе тӳлеме тытăнаççĕ | | | |
|---|---|---|---|---|
| | Соцпакет правине сыхласа хăварнă пулсан | Соцпакетпа пĕтĕмĕшле усă курма пăрахасси пирки пĕлтернĕ пулсан (705,10 тенкĕ) | Соцпакетăн медицина пайĕпе усă курма пăрахасси пирки пĕлтернĕ пулсан (627 тенкĕ) | Соцпакетăн транспорт пайĕпе усă курма пăрахасси пирки пĕлтернĕ пулсан (78,10 тенкĕ) |
| Вăрçă инваличĕсем | 2691,70 | 3396,80 | 3318,70 | 2769,80 |
| Вăрçă участникĕсем | 2691,70 | 3396,80 | 3318,70 | 2769,80 |
| Çар çыннисем, вĕсен пĕччен юлнă мăшăрĕсем | 314,60 | 1019,70 | 941,60 | 392,70 |
| Çар ĕçĕсене хутшăннă ветерансем | 1163,80 | 1868,90 | 1790,80 | 1241,90 |
| 1-мĕш ушкăн инваличĕсем | 1673,10 | 2378,20 | 2300,10 | 1751,20 |
| 2-мĕш ушкăн инваличĕсем тата инвалид ачасем | 993,30 | 1698,40 | 1620,30 | 1071,40 |
| 3-мĕш ушкăн инваличĕсем | 654,50 | 1359,60 | 1281,50 | 732,60 |

**Е. АЛЕКСАНДРОВА, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ.**

# 2009 çулшăн отчет докуменчĕсене йышăнасси вĕçленчĕ

Саккунпа пăхнă вăхăтра Муркаш районĕнчи 303 ĕç паракан (республикипе 15,9 пин ĕç паракан) 2009 çулшăн отчет докуменчĕсене тăратнă.

Мартăн 1-мĕшĕччен Чăваш Енри организацисемпе предпринимательсен Пенси фондне хăйсем патĕнче ĕçлекенсен харпăр хăйĕн страховани стажĕ пирки тата вĕсемшĕн иртнĕ çулшăн страховани взносĕсем мĕн чухлĕ тӳлемелле пулнă пирки тата мĕн чухлĕ тӳлени çинчен сведенисем тăратмалла пулнă. Ку даннăйсем кашни ĕçлекен çыннăн пулас пенсийĕн виçипе тӳррĕмĕнех çыхăннă.

Раççей Федерацийĕн Пенси фончĕн Муркаш районĕнчи управленийĕнче 12139 ĕçлекен, республикипе вара 692 пин ĕçлекен тĕлĕшпе отчет докуменчĕсене йышăннă. Кунпа пĕрлех районĕпе 82,5 процент, республикипе 74,9 процент отчетсене организацисем Пенси фондне электронлă формăпа хӳтĕленĕ çыхăну каналĕсемпе (Интернет урлă) ярса панă.

Районĕпе ĕç паракансенчен 3-шĕ отчетсем памалли вăхăта пăсрĕ. Вĕсене 1,2 пин тенкĕлĕх штраф тӳлеттересси пирки акт çырнă. Чăваш Республикипе вара кун пек ĕççене 82 страхователь тĕлĕшпе пăхса тухнă, пĕтĕмпе 162,7 пин тенкĕ штраф шыраса илме актсем çырнă.

Хăйсем патĕнче ĕçлекенсем тĕлĕшпе сведенисем тăратман организацисем те çук мар. Республикипе вĕсем 152. Районта вара вĕсен шутĕнче – «Агро-Урожай» хупă акционер обществи. Уйрăм предпринимательсенчен 48-шĕ хăйсем тĕлĕшпе те отчетсене тăратса пĕтермен. Пенси фончĕн специалисчĕсем асăннисем харпăр хăйсен сведенийĕсене тăратчăр тесе тимлеççĕ. Кунпа пĕрлех саккуна пăхăнман йĕркесĕр страхователÑсен списокĕсене Чăваш Республикин Прокуратурине ярса панă.

Ĕç паракансем хăйсен ĕçченĕсем пирки сведенисем тăратнине кашниех тĕрĕслеме пултарать. Çулталăкра пĕр хут Пенси фончĕ заказлă çырупа граждансене вĕсен счечĕсем пирки пĕлтерет. Унта ĕç паракансем çыннăн пенсин страхланă тата пухăнакан пайĕсене финанслама мĕн чухлĕ укçа куçарни пирки пĕлтерни те пулать.

**О. АЛЕКСЕЕВА, РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

Сывлăх

# Эпир – сывă пурнăç йĕркишĕн!

Апрелĕн 17-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче спорт уявĕ иртрĕ. Кунта 50 çул урлă каçнă арçын ветерансен волейбол командисем пухăнчĕç. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕн кубокне çĕнсе илессишĕн çак турнир кăçалхипе иккĕмĕш хут иртрĕ. Ăна малашне çуллен ирттерме палăртнă. Асăннă ăмăртăвăн тĕллевĕсем: физкультурăпа спорта çынсене ытларах явăçтарасси, физкультурăпа спорта çынсем хушшинче анлăрах пропагандăласси.

Вăрттăнлăх мар, хальлĕхе Раççейре те, республикăра та, районта та арçынсем хĕрарăмсенчен 12–13 çул сахалрах пурăнаççĕ. Арçынсен сывлăхне сыхласси пирĕн çĕр-шывра приоритетлă енсенчен пĕри пулса тăмалла. Ăна шута илсе Раççей Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви, медицина, обществăпа политика организацийĕсем кирлĕ пĕтĕмлетӳсем тумалла.

Асăннă турнирăн тĕп тĕллевĕ шăпах çавăнпа çыхăннă та ĕнтĕ. 50–60–70 çулта та арçынсем активлă, сывлăхлă пулчăр, хăйсен тĕслĕхĕпе пурнăç илемĕпе, юратнă ĕçпе, тус-юлташсемпе, ачасемпе, мăнуксемпе киленме пĕлнине кăтартса паччăр.

Ăмăрту вара чăннипех те хĕрӳ иртрĕ. Условисемпе килĕшӳллĕн унта Муркаш районĕнче ялан пурăнакансем е ĕçлекенсем çеç хутшăнма пултарчĕç. Çакна шăпах ĕнтĕ турнира вырăнти çынсене ытларах явăçтарма тунă.

Кăçал турнира 5 команда пухăнчĕ. Кусем вĕсем кубока иртнĕ çул тивĕçнĕ Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн, унсăр пуçне «Ударник», Ильич ячĕпе хисепленекен, район пуçлăхĕ ертсе пыракан район администрацийĕн тата районти тĕп больницăн командисем.

Ăмăртăва хутшăнакансене малтанах район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, районти волейбол федерацийĕн председателĕ В.И. Вязов тата районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов саламларĕç. Ăмăрту çивĕч кĕрешӳре иртрĕ. Çапах та вăл çĕнтерӳçĕсĕр пулмасть. Иртнĕ çулхи пекех, турнир çĕнтерӳçи тата кубока çĕнсе илекенни Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Васильев уйрăм предпринимателĕн команди пулса тăчĕ. 2-мĕш вырăнта Ильич ячĕпе хисепленекен, 3-мĕшĕнче «Ударник» хуçалăхсен командисем.

Призерсем пурте асăнмалăх спорт медалĕсене, дипломсене тата хаклă парнесене тивĕçрĕç.

Турнир спонсорĕсене те тав сăмахĕ каламалла. Кусем вĕсем: И.Н. Никитин, Г.Г. Михайлов, В.И. Вязов, Р.Х. Чебенов. Вĕсем хăйсем те сывă пурнăç йĕркине тытса пыраççĕ, кунпа пĕрлех çак енне туртăнакансене те пулăшма тăрăшаççĕ.

**В. ДАНИЛОВ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ.**



**Сăн ӳкерчĕкре: ăмăрту пуçланас умĕн Ю.А. Иванов сăмах калать.**

2010 çулхи халăх çыравĕ

# Вăхăт нумаях юлмасть

2002 çулхи январĕн 25-мĕшĕнче йышăннă 8-ФЗ № «Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕ çинчен» Федераллă саккуна, Раççей Федерацийĕн Правительствин 2006 çулхи январĕн 11-мĕшĕнчи 7-р №, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2008 çулхи мартăн 7-мĕшĕнчи 53-р № хушăвĕсене тĕпе хурса, 2010 çулхи халăх çыравне хатĕрленессипе сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Халăх çыравне йĕркеллĕ хатĕрленсе ирттересси пирки район администрацийĕн пуçлăхĕ «Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне ирттерессипе Муркаш районĕн территорийĕнче туса ирттермелли хатĕрленӳ ĕçĕсем çинчен» йышăну кăларнă. Кун пек йышăнусене ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем те тунă, çырава хатĕрленсе йĕркеллĕ ирттерес енĕпе комиссисем йĕркеленĕ.

2009 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче Муркаш районĕн территорийĕнче 2010 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хатĕрленсе ирттерессипе ĕçлекен комиссин ларăвĕнче комиссин 2010 çулхи ĕç планне çирĕплетнĕ. Кунпа пĕрлех ку ларура çынсем хушшинче çырав ыйтăвĕсемпе туса ирттермелли информаципе ăнлантару ĕçĕсен планне те пăхса хунă.

Çитес çырава тĕплĕн хатĕрленсе ирттерес тĕллевпе районта вырăнти самоуправлени органĕсем хăйсен полномочийĕсене мĕнле пурнăçланă пирки, Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне ирттерессишĕн ответлă пулса тăракан ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, ĕç тăвакан федераллă органсен территори органĕсем хушшинче мониторинг ирттеретпĕр. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта районта Пĕтĕм Раççейри халăх çыравĕн материалĕсемпе татах 34 стенд йĕркеленĕ. Паянхи куна халăх çыравĕн тематикипе йĕркеленĕ стендсем пĕтĕмпе 66. Вăл шутран пĕри патшалăх статистикин органĕнче, тепри – район администрацийĕнче, 14-шĕ – ял тăрăхĕсенче, 21-шĕ – библиотекăсенче, 29-шĕ – Культура çурчĕсенче.

Патшалăх статистикин федераллă службин Чăваш Республикинчи пайĕн 2010 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнчи 07-03-83/86 п № «Адрес хуçалăхĕнче йĕрке тăвасси çинчен» çырăвĕпе килĕшӳллĕн районти ялсенче адрес хуçалăхĕ епле шайра пулнине тепĕр хут тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕслев 16 ял тăрăхĕн территорийĕнче те иртнĕ. Унта ял тăрăхĕсенче ĕçлекенсене те явăçтарнă. Тĕрĕслев итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май туса çитереймен ĕçсене те палăртса хутăмăр. Пĕтĕмпе 3 ял тăрăхĕн территорийĕнче 158 çурт çинче номер çукки палăрчĕ. Вăл шутран Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн территорийĕнче – 28, Катькас ял тăрăхĕн территорийĕнче – 118, Ярапайкасси ял тăрăхĕн территорийĕнче – 12.

2010 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне 2010 çулхи Пĕтĕм Раççейри халăх çыравне хутшăнакансен спискине туса çитернĕ. Йĕркелӳ планĕпе килĕшӳллĕн район территорийĕнче çырав участокĕсем 6 тата инструктор участокĕсем 23 йĕркеленĕ. Çырав тата инструктор участокĕсене ăçта вырнаçтарассин ыйтăвĕсене татса панă ĕнтĕ. Уйăрса панă пӳлĕмсем палăртнă нормăсене тивĕçтереççĕ.

**З. ВИНОГРАДОВА, Чăвашстатăн предприятисен статистикин Муркаш районĕнчи пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ.**

01 служба пĕлтерет

# Асăрханулăх çинчен манас марччĕ

***Çурхи кунсем çитнĕ май чылай çĕрте унччеnхи кивĕ курăксене çунтарма тăрăшаççĕ. Анчах та кун пек чухне асăрханулăхпа тимлĕх пирки манма кирлĕ мар. Унсăрăн пушар тухас хăрушлăх пысăк.***

Юлашки кунсенче кивĕ курăка çунтарнипе пушар тухас хăрушлăх пулнă е пушар тухнă тĕслĕхсем пĕрре кăна мар пулчĕç. Акă апрелĕн 20-мĕшнех илер. Типĕ курăк çунтарнине пулах Мăн Сĕнтĕр райпо хатĕрлев кантурĕн территорийĕнче усă курман кивĕ çурт çунчĕ.

Апрелĕн 21-мĕшĕнче те пушар хурушсăрлăхĕ енĕпе лăпкă пулмарĕ. Юнкăри врач амбулаторийĕнче ĕçлекенсем 11 сехет тĕлĕнче пуçтарнă çӳп-çапа çунтарма тытăннă. Анчах та алхасма тытăннă вут-çулăма хăйсен вăйĕпе чарма пултарайман. Çапла вара картиш çунса юрăхсăра тухнă.

Çав кунах 12 сехет çурăра Мăн Шаптак ялĕнче тырă токĕ çунса каяс хăрушлăх тухса тăчĕ. Каллех çакă типĕ курăка чĕртсе янипе çыхăннă.

13 сехет çурăра Кăпас ялĕ патĕнче кивĕ курăк çунчĕ. Çулăм вăрмана кĕрсе каяс хăрушлăх та пулман мар. Çав кунах кун пек тĕслĕхсем Мăн Сĕнтĕрте, Нискассинче те пулчĕç.

Тепĕр кун та инкек-синкексĕр пулмарĕ. 2 сехет тĕлĕнче Çурлатринче, 4 сехет тĕлĕнче Шурчара дача участокĕсем патĕнче, 14 сехет тĕлĕнче Куçкин ялĕ çывăхĕнчи вăрман патĕнче типĕ курăк хыпса илчĕ. Çав кунах 16 сехет иртсен Атăл хĕрринче пулăçсем чĕртнĕ вутран çулăм Ильинкăри кану çурчĕ патне те çитрĕ. 17 сехет тĕлĕнче кун пек тĕслĕхсем Шомикра, Мăн Сĕнтĕрте, 18 сехет тĕлĕнче «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики патĕнче пулчĕç. Хыççăн тата Рыккакасси патĕнче курăк çунни дача çурчĕсем çунса каяссипе хăрушлăх кăларса тăратрĕ.

Çавна каласа хăвармалла. Пушар хăрушсăрлăхĕ яланах тивĕçлĕ шайра пулмалла. Пушар никама та шеллемест. Çавăнпа та пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăхăнассине яланах малти вырăна хурасчĕ.

**И. СМИРНОВ, районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:121301:850, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:121301, для сельскохозяйственного производства, площадью 51502 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.